К 84.89(=Чув)
В55
Ч-40191

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Ҫырла тусĕсем

Клавдия
ВИШНЕВСКАЯ



Национальная библиотека ЧР
4-040191

К
К 84.88(=4чу
В55
Кр.

# ÇЫРЛА ТУСĔСЕМ

Клавдия
**ВИШНЕВСКАЯ**

Сăвăсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2006

УДК 821.512.111— 93
ББК 84 (2Рос=Чув) 6—5
В 55

Художникĕ ***Т.И.Немцева***

ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

Ч-40191
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Вишневская К.И.**
В 55 Çырла тусĕсем: Сăвăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. — 31 с.

**УДК 821.512.111—93**
**ББК 84 (2Рос=Чув) 6—5**

**ISBN 5-7670-1435-3**

© Вишневская К.И., 2006
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2006

## ПĔЛĔТ, ЭСĔ КАЛĂН-ШИ?

Кам шăратнă хĕвелне?
Кам çутарнă çумăрне?
Пĕлĕт, эсĕ калăн-ши?
Çумăрне хăв чарăн-ши?

Тӳпере хĕвел пăхать,
Çумăрпа вăл тавлашать.
Илĕртсе мĕн пуррине
Ăшшăн култарать çĕрне.

Кам шăратнă хĕвелне?
Кам çутарать çумăрне?
Пĕлĕт, эсĕ калăн-ши?
Çумăрне хăв чарăн-ши?

## ХĔВЕЛ

Хĕлле сивĕ çил улать —
Сарă хĕвел пытанать.

Çуркунне хĕвел тухать,
Пулăшать тума суха.

Çулла ача пек чупать,
Шевли сана чуптăвать.

Кĕркунне те пит паха:
Ылтăн тĕслĕ пур пахча.



## ТАВАХ

Телей сунатăп аннене
Хама савса ӳстернĕрен.
Ун çепĕç-çепĕç кăмăлне
Нихçан кăлармăп чĕремрен.

Анне ăшши — хĕвел ăшши.
Шап-шур сухаллă ватăсем
Хăш вăхăтра каланă-ши:
«Тăван çĕршыв — анне», — тесе.

Тавах Çĕршыв аннемĕре
Кашниншĕн ырă пулнăран,
Чунăмăра-чĕремĕре
Хĕвел ăшшийĕ панăран.

## ĔÇЕ ЮРАТСАН

Ĕç пек лайăххи тата хăватли,
Мĕн пур çĕр çинче унран усăлли?
Ăна пĕлмесен, алла тытмасан
Мĕнле çĕр çинче хăйса эс утан?

Пĕлместĕп «пулмасть» тенине,
Илтессĕм килмест суя сăмахне.
Пур ĕç те пулать, ĕçрен ан хăра,
Паян ăнмасан — чапланĕ ыран.

## ЭТКЕР

Мĕн-ши вăл эткер?
Атьăр вуласа пĕлер.

Пĕри калать:
— Мул пуянлăхĕ.
Тепри калать:
— Чун пуянлăхĕ.
— Несĕл — акă пуянлăх:
Ача кăна — мĕнпур пуласлăх.



## ÇЫРЛА ТУСĔСЕМ

Куçук, Ваçук — тантăшсем.
Пĕрле кайрĕç вăрмана
Пиçнĕ çырла пуçтарма.

Ваçук — шурă чашăкпа.
Куçук тытнă аллине
Ашшĕ тунă пуракне.

Çырла тĕлне çитрĕç те
Ывăтрĕç тирĕксене.
Тăрăнчĕç çырла çине.

Нимсĕрех Ваçук, Куçук.
Утрĕç килелле туссем
Айăплăн пуçа чиксе.

Килĕсене çитсен:
— Çырла çук, — терĕç.
Пичĕсене хĕретрĕç.

— Вăрманта çырла пурах, —
Терĕ ашшĕ йăвашрах. —
Йăмăку кĕтет çырла!
Ан суй урăх эс çапла.
Ваçукăн та йăмăк пур,
Вăл та çырла кĕтет, кур...

## ЧЕЧЕК

Чечек акса хăварсан,
Кăшт кĕл сапса шăварсан
Шăтать чечек. Ӳс, кĕлчечек.

## ТĔЛĔНТЕРМĔШ

Юр муклашки купаланса килет,
Алтаттисен карти патне çитет.
— Тĕлĕнтермĕш, — тет Алатать, —
Пирĕн урамра — Алтай.



## ИТЛЕСЕН

— Хӑвӑнран аванрах
Пултӑр санӑн юлташ, —
Калать мана атте.

Хамран лайӑхрах
Пур Ваҫукӑм юлташ.
Вӗренет вӑл ӑста.

Юлташăмпа ялан
Ман выляс килет.
Вăл çывăх тăванран.

Асли каланине
Итлĕп вĕçĕмех.
Итлесен аттене
Ӳсĕп телейлех.

## ЗАРЯДКА ТУМАЛЛА

Тумасть зарядка пĕчĕк Ваня,
Вăл ӳркенет, пит кахалланнă.

Тек кăмака çине пытанчĕ,
Апат çиме кăна вăл анчĕ.

Арçын ача хавшаккăн ӳсрĕ,
Хăй тусĕ кулнине те тӳсрĕ.

Çулсем иртсен ача ăнланчĕ,
Зарядкăпа вăл маттурланчĕ.

Ирпе ирех тăрать ав Ваня:
— Зарядка тумалла! — тет. —
Камăн?

## САРĂ ЧĔПĔ

Шип-шип шиплетет
Сарă пĕчĕк чĕпĕ.
Мĕншĕн çаплах макăрать?
Хăй амăшне вăл шырать.



## ВАСЕЛИСА

Ир те пулчĕ... Каç пулать.
Васелиса çывăрать.
Вăрансассăн:
— Мĕн çиес? —
Тет ялан çак Вĕçелес.

Çĕр иртсессĕн ир килет.
Хĕр ача кахалланать.
Ĕçлемен. «Çиес килет», —
Тет каллех çак Вĕçелес.

Тек пулмарĕ чăтасси.
— Ачаран кам пуласси
Паллă, — терĕ ашшĕ. — Вĕçелес!
Йĕплĕ хулпа вĕтелес.

## КУЛĂШ

Кулăш кустăрми килсен
Кулăш купăсне калаççĕ.
Кулăш купăсĕ йĕрсен
Кулаканран кулаççĕ,
Йĕрĕнекенрен йĕрнеççĕ,
Çапаканран тараççĕ.

## ЧЕЧЕКЛЕН, РАÇÇЕЙ

Ман Çĕршывăм — савăк юрă,
Ман Çĕршывăм — тулăх çĕр.
Уншăнах хыватăп юрă,
Пулăп чи телейлĕ хĕр.

Вăхăт иртĕ, пур кĕвве те
Туйăп эпĕ вăйлăрах.
Çулăм кĕрĕ чĕрене те,
Эпĕ çунăп саншăнах.

Манăн шанчăк — чĕртнĕ çулăм,
Сӳнмĕн эсĕ нихăçан.
Чечеклен, Раççей çĕршывăм,
Пултăр тăнăçлăх ялан.



## ПĂРÇА ХУРАЛÇИСЕМ

Чипер Сетнерпе Ваççа
Хураллаç уйра пăрçа.
Йăлт-ялт пăхаç тавралла —
Хуралта сых тăмалла.

Вĕççе çитрĕç кайăксем.
Уй-хир пулчĕ хуп-хурах.
— Пăрçа çиеç тусăмсем,

Хăратар мар. Пултăрах, —
Терĕ Сетнер юлташне.
Хӳтермерĕç «туссене».

## ÇИТЕРМЕРЕ

Йăшăл симĕс курăк —
Ку вăл пирĕн улăх.

Эп кĕтетĕп сурăха —
Кашаман, ан çулăхах.

Çăкăр кăларатăп.
Кăшт тăвар сапатăп.

Путекне çитерĕп,
Амăшне хӳтерĕп.

Кĕсьене çулаççĕ,
Çăкăра шыраççĕ.

Хăпсамччĕ эс, сурăх,
Çисемччĕ çĕн курăк.

## ЛУПАШКА

Йăлтăртататать лупашки,
Кĕмĕлрен-ши валашки?
Алла тытса пăхас-ши?
Е атăпа кĕрес-ши?



## САЛТАК

Пуласшӑн Петя салтак:
Тытнӑ хӑй ҫумне патак.

Сыхлӗ Тӑван ҫӗршыва —
Ӳстӗрччӗ ҫеҫ хӑй сывах.

Пиччӗш Митя — салтакра,
Сыхӑ тӑрать вӑл ҫарта.

Каясшăн Петя çара.
Çук-çке пăшал алăра.

## ХĔВЕЛ ПИКЕ

Хĕрлĕ тухăç хĕмĕнчен,
Шурăмпуç кăварĕнчен
Тухрĕ кăмăллă сар хĕр,
Кĕтсе илчĕ тулăх çĕр.

Йăл! кулать те çĕр çине —
Тӳперен шевли ӳкет.
Ешĕл тумлă ялсене
Ăшшине вăл парнелет.

Каç пуçтарнă хĕлхемне
Салатать «хĕр» ирхине.
Тӳперен хĕвел анать —
Çут тĕнче ыйха путать.

## КУШАК ÇУРИ

Вĕçĕм-вĕçĕм мăрлатать,
Кушака вăл вăратать.
Кам-ши пур ун çумĕнче,
Ват кушакăм патĕнче?
Курăнать хӳри —
Кушак çури.



## НЯНЯ

Ашшĕ-амăш — кинора,
Няня паян — Еруслан.
Йăпатмашкăн Инора
Тăвас терĕ ярапл ан.

Пĕчĕкскер-çке сăпкара
Кармашать. Тухасшăн-ши?
Чарăнмасăр макăрать,
Пиччĕшне çухатрĕ-ши?

Тăрмашать ав Еруслан,
Инор йĕни — ним те мар.
Вăл ятлать: «Ан курнăçлан,
Эпĕ санăн аннӳ мар».

## СĂПКА ЮРРИ

А-а-а ачине.
А-а-а паппине.
Ыйхă килсе сăпкине
Тĕлĕк парать ачине.

А-а-а ачине.
А-а-а паппине.
Сăпка юрри юрласа
Çыврататăп пепкене.

## КАÇПА

Каçпа хĕвел хĕрелет,
Ачан куçĕ хупăнать.
Автан-чăххи пур пĕрле
Ыталанă каштана.

Тутлă ыйхи сăпкара
Сана кĕтет савăнса.
Нянем, эс те çывăрах
Ыйха чунтан тав туса.

ч-40191
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ



## ПЎСКЕ

Пўске ўкрĕ алăран.
Мĕн-ма тарчĕ вăл манран?
Шыв юхать, кунта çырма —
Мечĕк кайнă çăвăнма.

## КАЯ ЮЛНӐ КĔР

Кĕрхи кунсем килсенех
Сарӑ çулçӑ та ӳкет.
Юпа уйӑх çитсенех
Юпа кӑна ĕнерет.

Юпапа чӳк кунĕсем
Нихӑçан ӑшӑнманран,
Çара тумпа юлнӑçем
Хаярланнӑ сив тӑмран.

Кӑçал йӑлтах урӑхла:
Кĕрĕме хĕвел савать.
Юпа уйӑх — ыр тӑхлач —
Еплерех калча ташлать.

Кая юлнӑ кĕр çаплах
Çулçӑсемпе йӑпанать.
Ӳрĕк чӳк хашка-хашка
Сивĕ сывлӑш хӑвалать.

Ун çитмелле вӑхӑта —
Хĕл сиввине кармалла.
Кĕр ӑшшине хупласа
Пĕвене пӑр сырмалла.



## КАЧАКА

Кача-кача-качака —
Ме-ке-кек.
Мĕншĕн-ха эс така пек?
Сухал çеç хăвăнни пек.

Хаярланчĕ качака:
— Ме-ке-кек!

Эп ыйтатăп:
— Сан вара мĕнле инкек?

— Ан кул эсĕ, ме-ке-кек!.. —
Хăй вара текех тĕкет.

## КИ-КИ-РИ-КИК!

— Кам тăрать-ха чи малтан
Хăйне кура маттуртан?

— Анне, — хуравларĕ Урине.
— Çук, атте, — терĕ Урите.
— Кушак! — хыттăн кăшкăрчĕ Куçак.
— Çук, Кампур, — терĕ çепĕççĕн Якур.

— Эс пĕлетĕн-и, Якку,
Кам калать ки-ки-ри-ку?
— Ав-та-ан! —
Пĕлчĕ пĕчĕкки малтан.
Пит аван.

## ХĔВЕЛ

Хĕвел шевли — анне кулли пек,
Йăл кулчĕ савăнса ирпе.
Хĕвел ăшши — анне алли пек,
Вăл ачашларĕ шевлипе.



## ЫРӐ АСАННЕ

Ҫӑмӑл тӗлӗклӗ чӑваш —
Пӗчӗк мӑштӑк-мӑштӑклаш.
Ирӗн-кунӗн, каҫсенче —
Асанне ун ҫумӗнче.

Йӗрмӗш питлӗ мӑнукне
Сиктерет ҫине-ҫине.
Ҫавӑнпа-ши ӗмӗрех
Пурӑнать вӑл чӗререх?

## СĂПКА ЕККИ*

Хĕвел анать, каç пулать,
Ачан куçĕ хупăнать.
Пĕчĕк тути йăл кулать,
Пепкеçĕм ыйха путать.

Канлĕ ыйхă сăпкара
Сана лăпкать тĕлĕкпе.
Пĕчĕк пепкем, çывăрах,
Сăпки ярăнтăр чипер.

Çăмăл екки йăпатса
Çăмăл ыйхă парнелет.
Ачашшăн эс çывăрсан
Пурнăç ĕмĕчĕ килет.

## МĔНШĔН?

Кун кĕске,
Çĕр вăрăм.
Мĕншĕн?
Ылтăн тĕс кайсан
Таврана килет
Шап-шурă тĕс кайран.
Мĕншĕн?

---

* Екки — ярăнни, ярăну.




## ШКУЛА

Пĕчĕк хĕр ача
Шкула пуçтарăнать.
Паян кун каçа
Кĕнеке вулать.

Каясшăн вăл шкула,
Шикленмест çумăртан.

Çил вĕçĕм улать,
Ачана хăратать.

Пĕчĕкки те пачах
Парăнмасть пулмалла.
Вĕренме хĕр ача
Вĕçтерет шкулалла.

## ÇĔНĔ ÇУЛТА

Хĕл Мучи — ман асатте,
Пачĕ вăл парне — тетте.
Юр пики — манăн анне,
Вăл юрларĕ юррине.

## ПАРНЕ

Парне пачĕç Çĕн çулта:
Сăвă лайăх вуларăм,
Шăпчăк евĕр юрларăм
Савăннипе ташларăм.
Парăччĕç парне татах:
Анчах хутаççи пушах.



## ТИМУР ХĂЛАТ

Курăр Тимура паян
Купăста пекех тăрать.
Хускалаймасть те наян:
Утсан ӳкесрен хăрать.

Вăл капмар, хăлат пекех,
Çаврăнçусăр, пит мăран.
Тайăлать çине-çинех,
Сăнĕпе те пит кăра.

Ача амăшĕ, ара,
Хĕлĕн сиввинчен хăрать.
Тумлантарнă-çке çăра —
Ав Тимур аран тăрать.

## ПУР ЯПАЛАН САССИ ПУР

Хăнтăр-хăнтăр тумасăр
Йăлтăр! çиçĕмĕ çиçмест.
Чăшăл-чăшăл тумасăр
Акнă тырă та ӳсмест.

Сăмах-юмах пулмасăр
Çĕнĕ кунăм пуçланмасть.
Шăкăр-шакăр тумасăр
Чашăк-тирĕк çăвăнмасть.

Пур япалан сасси пур:
Сассăр нимĕн те пулмасть.
Сасна пар та вăйна хур —
Унсăр ĕç-пуç ăнăçмасть.

## ХĔВЕЛ ШЕВЛИ

Маша — пĕчĕк хĕр ача,
Хăй вăранчĕ шевлепе.
Чăлт таракан «мулкача»
Вăл тытасшăн аллипе.



## ГРУНЯ

Çиес килет Груньăн
Каçхине те груша.

Сад пахчинче груша —
Тĕттĕмре хăрушă.

Кĕтĕ ирччен Груня,
Татĕ пиçнĕ груша.

Груша çиет Груня,
Груша тытнă Дуня.

Вĕсем — чăн туссем,
Хăналаççĕ, илсем.

Пит аван-çке пурăнма,
Ыр туссемпе йăпанма.

## ЧУЧЧУ

Чу-ччу! ачине,
Чу-ччу! амăшне,
Чу-ччу! ашшĕне,
Чу-ччу! ыйхине.

Пепкем, сăпка ярăнсан
Юрла-юрла йăл кулсам.

Чу-ччу! ачине,
Чу-ччу! амăшне,
Чу-ччу! ашшĕне,
Чу-ччу! ыйхине.

Лăштăн-лăштăн ярăнса
Ӳс, ачам, ыйха путса.
Чу-ччу! ачине,
Чу-ччу! амăшне,
Чу-ччу! ашшĕне,
Чу-ччу! ыйхине.

Лăпланса эс çывăрах,
Пулăн, пепкеçĕм, сывах.

Чу-ччу! ачине,
Чу-ччу! амăшне,
Чу-ччу! ашшĕне,
Чу-ччу! ыйхине.

Çирĕп çитĕн, тĕреклен,
Пулăн лётчик, вĕçекен.

## УТИ-УТИ КĂВАКАЛ

Кайрĕ ирхине
Кăвакал анне
Чĕпписене ишме
Вĕрентме.

Ути-ути-ути!
Васкаварлă утти.
Утăрах, чупăрах —
Кӳлĕ ав çывăхрах.

Çутă кӳлĕ хĕвелпе
Çуталать ак кĕмĕл пек.
Кăвакалпа чун кĕрет —
Кӳлĕ çилсĕр чӳхенет.

# ТУПМАЛЛИ

3 Пĕлĕт, эсĕ калăн-ши?
3 Хĕвел
4 Тавах
5 Ĕçе юратсан
5 Эткер
6 Çырла тусĕсем
7 Чечек
7 Тĕлĕнтермĕш
8 Итлесен
9 Зарядка тумалла
9 Сарă чĕпĕ
10 Васелиса
11 Кулăш
11 Чечеклен, Раççей
12 Пăрça хуралçисем
13 Çитермере
13 Лупашка
14 Салтак
15 Хĕвел пике
15 Кушак çури
16 Няня
17 Сăпка юрри
17 Каçпа
18 Пўске
19 Кая юлнă кĕр
20 Качака
21 Ки-ки-ри-кик!
21 Хĕвел
22 Ырă асанне
23 Сăпка екки
23 Мĕншĕн?
24 Шкула
25 Çĕнĕ çулта
25 Парне
26 Тимур Хăлат
27 Пур япалан сасси пур
27 Хĕвел шевли
28 Груня
29 Чуччу
30 Ути-ути кăвакал

*Литературно-художественное издание*

Для детей дошкольного и младшего школьного возраста

**Клавдия Ивановна Вишневская**

**ÇЫРЛА ТУСĔСЕМ**

**ЯГОДНИКИ-СЛАДКОЕЖКИ**

Стихи

*На чувашском языке*

Художник *Т.И. Немцева*

Редактор *О.Л. Васильева*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректор *А.Г. Владимирова*
Компьютерная верстка *Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005—93—95 3003. Изд. лиц. № 06317 от 26.11.01. Подписано к печати 26.02.06. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Прагматика. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34. Учетно-изд. л. 1,26. Тираж 2000 экз. Заказ № К-6067. Изд. №10.
ГУП «Чувашское книжное издательство», 428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ

